Шупашкарта ђăвашла пиессăсем нумайланнăçемĕн нумайлана пуçларĕç. „Ђăвашсем“, „Йалта“, „Нарспи“, „Пуйан Карук“, „Ели“, „Кĕслеçĕ“, „Хум“ т. ыт. те. Арттиссем те хăйсен вăйĕсене палăрта пуçларĕç. Хусантан килнисем—Шевле, Корский, Куçмина çехђĕ, çĕнĕ арттиссенђен Ђаккина, Осиппова, Илларионăв, Кромов, Тимофейевă, Йекорăв паллă вырăн йышăнђĕç. Анђах выçлăх çул ђăваш театтăрне амантсах пăрахрĕ. Арттиссем нумайĕшĕ саланса пĕтрĕç, ђентăртан укçа пама пăрахрĕç, вырăнти пÿтшет вăйсăр пирки театтăра укçа пит сахал пара пуçларĕ. 1924—25 çулсенђе труппă пĕтĕмпех саланса пĕтрĕ. Епĕ те театтăра пăрахса кино ĕçне тытăнтăм.

Кайран кайран театтăр ĕçне арттис Осиппов тытăнђĕ, анђах вăл та пĕр-ик çул ĕçлесен вăл ĕçе пăрахрĕ. Халĕ ђăваш театтăрĕ çумĕнђе стути те пур, анђах ђăваш решиççорĕ çук. Иртнĕ çулта спектаккăђсене вырăс решиççорĕ ларткаларĕ. Анђах ђăваш ђĕлхине пĕлмен решиççор ђăваш театтăр ĕçне малалла йама пултарайас çук. Çавăнпа ђăваш арттисĕсен хăйсен хушшинђен иепле те пулсан решиççорсене сăрăхтарса кăлармалла. Халĕ ђăваш траматтурксем те йышлăланђĕç, ђăвашла пиесăсем те ђылай. Анђах вĕсен пиессисене ђăваш ĕсхалăхне кăтартма вăйлă ђăваш арттисĕсем кирлĕ. Пирĕн çамрăксенђен вăйлă арттиссем пулма пултараççĕ, анђах вĕсене йертсе пыраканĕ кирлĕ. Вăл ђăваш решиççорĕнђен килет. Решиççорсăр лайăх траматтурксем те, лайăх арттиссем те хăйсен пултаруллăхне палăртма пултараймĕç.

Епĕр çак иртнĕ вунă çул хушшинђе тата тепĕр паллă ĕç турăмăр. РФССРĕнђи вак халăхсен хушшинђе кино ĕçĕпе ђи паллă вырăн йышăнтăмăр. 1925 çултан пуçласа çак кунђен епĕр 6 пысăк кино карттинă, 7—8 вак карттинăсем туса кăлартăмăр. Халĕ пĕтĕм Сойус тăрăх хуласенђе те, йалсенђе те ђăваш карттинĕсем çÿреççĕ. Ђăваш култтурĕ çĕкленнĕçемĕн çÿле çĕкленет. Ђăвашăн халђхи пурнăçне револђутсиђенхи пурнăçпа танлаштарса пăхсан пуç çаврăнса кайаť. Вун виçĕ çул хушшинђе историре пулман ĕçсем пулса тăраççĕ.

Хаçатсем, шурналсем, шкулсем, полђнитсăсем, савăтсем, хапрăксем, колхоссем, театтăр, кино... Пурне те шутласа та тухаймăн... Шутлама та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вĕсем çулсерен мар, уйăхсерен ÿссе пыраççĕ. Ку уйăхра савăт, тепринђе автопус, çитессинђе клиççĕр, унтан Петвус, малалла ђукун çул, трактăр, компайн...

Пурне те çаксене ђăваш ĕççынни..е Совет влаçĕ параť.

Револђутсиђен çын вырăнĕнђе шутланман ђăлаш ĕçхалăхĕ халĕ ытти халăхсемпе пĕрлешсе çĕнĕ пурнăç тăваť.

Ђăваш интелекентсин, ђăваш арттисĕсен ђăваш ĕсхалăхĕн култтурлăхне хăпартас тесе, хăйсен пултаруллăхне мопилисатсилесе искусствă ĕçне сотсиалисăм тăвас ĕçпе çыхăнтарса пымалла.

**М-Кошкинский.**

# Йурă-мусăк ĕçĕ 10 çул хушшинђе.

Ђăвашсен йурă-мусăк ĕçĕ револђутсиђен ÿсмесĕр тытăнса тăнă. Халăх мусăк тĕлĕшĕнђен хастарлă пулсан та, пирĕнни мусăк ĕçне тĕплĕ вĕреннĕ çынсем, ни хорпа йурламалли, йе инструментпа каламалли ноттăсем пулман. Елĕкхи, револђутсиђенхи пурнăçран пире мĕн пурĕ те ђыхвăрпа çырнă икĕ йурă кĕнеки, тата пĕр кармониленĕ йурă йулнă. Шкулсенђе ђăваш йурри илтĕнмен, вĕсене йурлама ђарнă, ун вырăнне ăнланмалла мар вырăс йуррисем, пуринђен ытла киревсĕр ђиркÿ йуррисем йăлăхтарађђен йурлаттарса ађасен пуçне çаврăнă.

Револђутсиђен йурă-мусăк вăйсăр пулнипе, вăл ĕçе тăвакансем сахал майпе, ку таранђђен çак ĕçре пирĕн ытла пысăк, мухтанмалли çитĕнÿсем çук темелле. Анђах çапах та мусăк искусстви ђĕрĕлсе сарăлса пыраť: йурламалăх-итлемелĕх йурăсем, вĕсене йурлакан хорсем пур, халăх йуррине пуçтарас ĕç майĕпе наукка çулĕ çине туха пуçларĕ, мусăк валђи катăрсем хатĕрлес ĕç те Мусăк технĕккăмĕ уçнипе пуçăнса кайрĕ. Çаксене халĕ кĕскен уйрăмăн пăхса тухăпăр.

**Халăх йуррисене пухасси** икĕ йенђен ÿссе пыраť.

Пĕр йенђен пухнă, хут çине ноттăсемпе ÿкернĕ йурăсен йышĕ (шуђĕ) хăвăрт ÿсет, тепĕр йенђен—йурăсене тĕплĕрех, тĕрĕсрех çырма вĕренсе пыратпăр. Револђутсин малтанхи çулсенђе йурă пухакансен çумне (Павлăв, Лисков, Максимăв) çĕнĕ вăйсем хутшăнса пыраççĕ: Т. П. Парамонăв, В. П. Воропйов, К. Ç. Çеркейĕв, М. И. Илйин, А. И. Ваççилйĕв, Шашков, Айсман, Мусăк технĕккăмĕнђе

## 1929-МĔШ ÇУЛТА МУСКАВПА ȨУЛХУЛАНА КАЙНĂ РЕСПУПЛĔК ХОРĔ.



Малти йĕркере—сулахайран сылтăмалла: 3-мĕш—А. И. Токçина, 4-мĕш—В. П. Воропйов, 5-мĕш Ç. М. Макçимăв, 6-мĕш—Ф. П. Павлăв. Воропйовпа Макçимăв хушшинçе иккĕмĕш йĕркере тăракан Касаккова.

вĕренекенсем. Çаксем çумне тата икĕ вырăс мусăкĕççене хушмалла—Йуреневпа Суворăва.

Йурă пухас ĕçпе Ђăваш çĕршывне сăнакан Ушкăн хастарлă ĕçлет (унăн ăрасна мусăк сексийĕ пур). Халĕ Ушкăн илнĕ алçырнисенђе ноттăллă йурăсен шуђĕ 1000 патне çывхарат̆. Пухакансен аллинђе тата çавăн ђухлĕ пурри паллă, вĕсенђен хăшĕ йуррисене Ушкăна пама хатĕрлесе çитерне (Парамонăвăн 400 йахăн, 4 çынра Каврил Фетăрăвăн 230 йурри).

Йурăсем нумай пухăнаççĕ, анђах вĕсене пиђетлесе кăларасси кайа йулса пырат̆. Ку тĕлĕшпе пирĕн мĕн пурĕ икĕ кĕнеке Максимăвăн „Ђăваш кĕввисем" 1-мĕш пайĕ, çавăннах „202 тури ђăвашсен йурри" (çак уйăхсенђе çапанса пĕтет). Укçа çитменнипе Ушкăн пиђетлеме илнĕ Йуреневпа Суворăв кĕнекисене кăлараймарĕ.

Йурăсене тĕрĕсрех, ĕмĕр манмалла мар çырас тесен фонокрафпа çыраççĕ. Кăçал ку ĕçе те пуçласа йатăмăр. Ленинкратри Консерватторинђен ђĕннĕ Гомилин йулташ Шупашкара килсе 30 валĕк çине 100 йахăн ђăваш йурри çырса кайрĕ.

Кунта çакна та кăтармалла йурат̆. Кăçал ийуђ уйăхĕнђе Шупашкара консерта килнĕ халăх йуррине йурлакан ђаплă Ирмă Йаунçем 6 йурă çырса кайрĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, ку уйăмра пирĕн çитĕнӳсем нумай. Халăх йурри ђылай пуçтарĕнђĕ, ăна халĕ епĕр пĕле пуçламăр. Малалла тĕрĕсрех çырас тесен фонокрафпа ытларах ĕçлемелле, унпа шаппăр, сăрнай, кĕсле, купăс кĕввисене çырса хут çине ӳкерме тăрăшмалла. Тата пуçтарнă маттериалсене хăвăртрах пиђетлесе кăлармалла.

**Йурăсене хитрелетес ĕç** — 1908 çулта Ђĕмпĕрти Ђăваш шкулĕнђе йурлама вĕрентекен И. М. Тмитрийĕв кармониленĕ „Писнĕ писмен" йурăран пуçланса кайат̆. 1915—16-мĕш çулсенђе ку ĕçпе шкулра вĕреннĕ ђухне Парамонăв ĕçлесе пăхрĕ (унăн 5 6 кармониленĕ йурăсем пурђĕ, халĕ вĕсене йурламаççĕ). Унтан 1917-мĕш çулта епĕ кармониленĕ йурăсене йурла пуçларĕç (Тийĕк йытти, Çула тăрăх, Хĕрĕх ђалăш, Лутра шĕшкĕ. т. ыт. те). Вĕсене шаппирокрафпа „Ђăваш халăх йуррисем" тесе 1918-мĕш çул пуçламĕшĕнђе кăларнађђĕ.

1918—19-мĕш çулсенђе ку ĕçе Ф. П. Павлăвпа К. Лисков тытăнђĕç. Павлăв 1919-мĕш çулта шаппирокрафпах „Хитрелетнĕ йурăсем" кăларат̆.

Çак иртнĕ 10 çул хушшинђе йурăсене хитрелетесси ђылай малалла кайат̆. Кăтартнă çынсем çумне Воропийăвпа П. Й Йекорăва хушмалла.

Хитрелетнĕ йурăсем 3 кĕнекере тухнă: „Сăрнай". „Ђăваш кĕввисен" 2 мĕш пайĕ, „Çĕнĕ йурăсем". Пĕтĕмĕшпе илсен, хитрелетнĕ йурăсем халăх йуррисен характĕрне пăссах каймаççĕ. Çак кунсенђе „Çĕнĕ Сăрнай" йатлă кĕнекере 43 йурă тухаççĕ.

Шкул ађисене хăйсене ăрасна йурăсем парас шухăшпа „Шкул йуррисем" тухнă.

Йурăсене хитрелетес пуçне çĕнĕ йурăсем çырас ĕç те пуçăнса кайнă. Вăл йурăсенђен хăшĕ-хăшĕ массăллă йурăсем пула пуçларĕç (Çăпата, Малалла утар, Хресђен йурри, Çуллахи пек). Çырнă йурăсенђен пысăк формăллă йурăсем те пула пуçларĕç (Шанђăк, Октăпĕр çулĕ).

Пирĕн ройаљпа йурламалли йурăсем те пур, анђах вĕсене пиђетлемен (пиђетлени „Ђăвăш кĕввисен" 2-мĕш пайĕнђе 6 йура). Вĕсенђен нумайĕшĕ паллă, халăх йуратакан йурăсем пулса кайрĕç: Кик кик, Комиссарăн аттисем, Капкăн ђеђђотки, Пирĕн атте сасан пул, т. ыт. те).

Ку уйрăма итток тусан, çакă палăрат̆:

1) Хорпа солăпа йурламалли кармониленĕ йурăсен шуђĕ те ђилай, технĕк йенђен те вĕсене пит нађарах туман. Çĕнĕ йурăсем çырас ĕçре те пуçламĕшĕ пур.

2) Анђах ӳссе пыракан мусăк кулђтурăшĕн ку çитĕнӳсем çителĕклĕ мар. Пурнăçран кайа йулнă халăх йуррине илемлĕ кармони тумтирĕ гăхăнтарнипе ĕç пĕтмест. Нумайтарах çĕнĕ йурăсем кирлĕ.

3) Йурăсем анђах кирлĕ мар, ытти мусăк хурмисем — инструментсем, оркестăрсем, ансампĕлсем ваљђи çырнă пĭессăсем — пит кирлĕ. Оппĕрă пуласси те инçех пулмалла мар.

4) Çак пĭессăсене çырма, ђăваш мусăкне тепĕр çӳлерех пусма çине хăпартма — мусăк ĕçне ђи тĕплĕ пĕлни кирлĕ, ђăваш композиттăрсен аллинђе пĕтĕм мусăк технĕкĕн вăйĕ пулмалла. Вăл çукха. Ђăвашсене мусăк аслă шкулне йамалла, унђен хамăр пата вырăс композиттăрĕсене илсе килсе ĕçлеттермелле.

**Хорсем, исполниттĕлсем.** Вăтам хорсем пирĕн ђылай—петтехнĕккăмсенђе, 2-мĕш сыпăклă шкулсенђе ђасђасах килĕшӳллĕ йурлакан хорсем пулаççĕ. Хăш ђухне йалсенђе те аван хоркрушокĕсем пулкалаççĕ. Кунта çитменлĕхĕ çакă — хорсем йурлама çĕнĕ йурăсем тупаймаççĕ (йурăсен кĕнеки 4—5 çулта пĕрре тухат̆), тата вĕсене меттотĕк тĕлĕшĕнђен те никам та пулăшакан çук.

Аван, хутошĕствăллă йурлакан хорсем

сахал, вĕсем мĕн пурĕ те иккĕ ҫех пулнӑ. Малтанхи 1923-мĕш ҫулта выставккӑна кайнӑ Павлӑв орканисатсиленĕ хор, теприхалĕ ĕҫлекен. Ҫӑвашсен республĕк хорĕ. Ку йулашки хор пĕлтĕр Мускавпа Ҫулхулана кайса пысӑк ĕҫ туса килҫĕ. Ӑна 1927-мĕш ҫулта Мусӑк шкулĕ ҫумĕнҫе орканисатсиленĕ. Хор тата авантарах пултӑр тесен ӑна сасӑсем йенҫен вӑйлатмалла.

Ҫӑваш йуррисене хорпа йурланинҫен крамафон ҫине икĕ тапхӑр ҫырнӑ. Малтан 1923-мĕш ҫулта выставккӑна кайнӑ хортан—йурӑ, унтан иртнĕ ҫул Ҫӑваш хорĕ Мускава кайсан та 10 пласҭинккӑ ҫырнӑ, вĕсем хушшинҫе Токҫинӑпа Ваҫҫилйĕв солӑ йурлани 2 пласҭинккӑ.

Халӑх йуррисене авантарах палӑртас тесе, 1926-мĕш ҫултан (йанвартен) пуҫласа Етнокрафи консерҫĕсем пулаҫҫĕ. Унта ҫĕнĕ кармониленĕ, ҫырнӑ йурӑсене малтанхи хут йурласа кӑтартаҫҫĕ. Ҫак контсертсене пĕрехмай халӑхра паллӑрах ҫӑваш йурĕҫсене, мусӑк ӑстисене йурлама—калама ҫĕнеҫҫĕ. Йурӑҫсене ҫаксене хут купӑспа ӑста калаҭ), Синерти Волккӑв шӑппӑрҫа, Пуйанкассинҫи Никкифӑрӑв сӑрнайҫа, Фетӑр Иванӑв кĕслеҫе, тата ыттисене те.

Етнокрафи консерҫĕсем ҫулталӑкра пĕрре-иккĕ пулаҫҫĕ, ку таранҫен 5 контсерт пулнӑ.

Пĕҫҫен (солӑ) йурлакансенҫен ҫи палли—А. И. Токҫинӑ. Унӑн шӑпҫӑк сасси консертсенҫе—Шупашкарта та, Мускавра-та нумай ҫынна савӑнтарнӑ пулĕ. Анҫах йулашки вӑхӑтра Токҫинӑ совет—партти ĕҫĕпе нумай ĕҫленипе мусӑк ĕҫĕнҫен татӑла пуҫларĕ. И. В. Ваҫҫилйĕв—тепĕр паллӑ йурӑ ӑсти. Урӑх пирĕн паллӑ артиссем ҫук—солӑ йурлас тĕлĕшрен епĕр пит кайа йулса пыратпӑр. Ытти халӑхсен пĕтĕм Сойус тӑрӑх контсертсем парса ҫурекен йурӑ ӑстисем пур. Пирĕн те ку ĕҫе вӑйлӑлатма тӑрӑшмалла.

Орккестӑр йенҫен илсен—пĕр Мусӑк технĕккӑмĕ ҫумĕнҫи тухховой орккестӑр анҫах пур. Кунта пĕтĕмĕшпех тенĕ пек ҫӑваш аҫисем тӑраҫҫĕ.

Урӑх паллӑ исполниттĕлсем—купӑс ҫĕннĕ: Тамӑк кассинҫи Каврил Фетӑрӑва (вӑл йурӑ тĕлĕшĕнҫен пит ӑста ҫын, мĕн пурĕ 400 йурӑ ытла астӑваҭ), Елменти Ҫитӑр Слонӑва; Пӑрмасри суккӑр мусӑканта Оҫҫип Крикорйĕва (унӑн йӑмӑкĕ ройалҫ, т. ыт. те калакансем—ҫӑвашсенҫен ҫук.



Шупашкарти Мусӑк технĕккӑмĕн тухховой оркестӑрĕ.

**Мусӑк ĕҫĕ валҫи катӑрсем хатӑрлесси**

1926-мĕш ҫултан пуҫланаҭ темелле. Ҫак ҫул Шупашкарта Мусӑк шкулне

йалти ђăваш ађисене илме тытăннă. Вăл шкул 1920-мĕш çултанах пуçланнă пулсан та, унта унђђен ђăвашсем вĕренмен. Ђăвашсен шуђĕ ўссе пырăт, 6 çынтан пуçласа кăçал 40 çитрĕ. Пĕлтĕр Мусăк технĕккăмĕ уçăлђĕ, унта мусăк инструктăрĕсем, орккестăрта выђакансем, йурăçсем, ройаљ калакансем вĕренмелли оттеленисем уçăлђĕç.

Технĕккăмра вĕренекен çамрăксенђен хастарлисем палăра пуçларĕç—хăшĕ халăх йуррине пухас тĕлĕшпе (40-шер йур çырса панисем пур), хăшĕ—инструментпа (трупапа, купăспа, ройаљпа) калама хастарлă вĕренеççĕ, хăшĕ-пĕри тата йурăсем çырма, кармонилеме тытăнаççĕ.

Технĕккăм ђăваш мусăк таланђĕсемшĕн вĕсене пăхса ўстерсе, пурнăçа, йе аслă шкула кăларакан уђрештени пулмалла. Çавăнпа йалсенђе шкулсенђе мусăк тĕлĕшĕнђен палăракан çынсене—уçă, вăйлă сасăллисене, тĕрлĕ инструмĕнпа ăста калакансене — технĕккăма йама тăрăшмалла, вĕсен хастарне çухатмалла мар. Вара вĕсенђен пĕр 4—5 çултан мусăк ĕçне тăвакансем — йурă пуçтаракансем, мусăк çыракансем, йурлама вĕрентекенсем, ăста йурлакансем, орккестăрсенђе выђакансем çигелĕклĕ тухĕç,— ђăваш мусăкĕ хăйĕн 2-мĕш пусми çине хăпарĕ

**Ç. Макçимăв.**

---

# Хутошĕствă ĕçĕ.

Ĕлĕк авал ђăвашăн халăх искусствисĕр пуçне урăх искусствă—карттин тăвас йĕрке, пулман теме йурăт. Револђутси пуçланиђђен ђăвашсенђен вĕреннĕ хутошнĕксем те пулманпа пĕрех. Хутошĕствă акатеминђен вĕренсе тухни пĕр Кокељ йатлă хутошнĕк çех пулнă, анђах вăл та ђăваш хушшинђе, ђăваш искусствишĕн ĕçлемен. Револђутси умĕн акатемире тата виçĕ ђăваш ађи вĕреннĕ, анђах вĕсенђен ђăваш хушшинђе пĕри çех ку таранђен пĕрмайах ĕçлесе тăђĕ. Халĕ те асла хутошĕствă шкулĕсенђе ђăвашсенђен вĕренекенсем палăраççĕ. Çавăнпа çак ĕçпе ĕçлекенсем çименни йулашки вăхăтра питех те палăра пуçларĕ. Малалла пĕтĕм кулђтурлăх ўссе пынипе хутошĕствă ĕçпе ĕçлекенсем кирли тата ытларах курăнса тăрăт.

Çапах та хутошĕствă ĕçĕ пирĕн пĕр вырăнта тăрăт темелле мар. Ђăваш автономийĕ пуçланнăранпа вунă çул хушшинђе ђылайах çитĕнўсем курăна пуçларĕç. Ђăваш Оплăçĕ уçăлсанах çутта кăларас пайĕ çумĕнђе çекси **ИЗО** пулнă. Вăл çекси хутошĕствă ĕçне шкулта та халăх хушшинђе сарма тăрăшрĕ, анђах унăн нумайах ĕçлеме май килеймерĕ. **НЭП** вăхăтĕнђе ытти вак уђрештенисемпе пĕрле ăна та хупрĕç. Çапах та çав çекси хутошнĕксене пĕрлештерсе тĕрлĕ хутошĕствă ĕçĕсене туса пыђĕ.

Нэп хыççăн пĕр пилĕк çула йахăн хутошнĕксен пĕрлешўллĕ ĕç пулаймарĕ. 1927 çулта ђăваш искусствине палăртма Мускавра Наукка Акатеминђе ђăваш искусстви каçĕ туса иртернĕ. Çак каçра хутошĕствă пайĕ те пулнă. Паллăрах карттинсене илсен çаксене асăнмалла пулăт. Вырăс Похоротски хутошнĕкĕн—шăпăр каланине итлекенсем; Косăђкин хутошнĕкĕн—Шăпăрçă; Пуђкин хутошнĕкĕн—Ђăвашсем йармăрккăра; ђăваш



Вĕренекенсем електритсă оппăђĕ тăваççĕ.
Спиритонăв хутошнĕк карттинĕ.

Спиритонăв М. хутошнĕкĕн паллăрах карттинĕсем: — Çăпата хуçакан ђăваш, Ђăваш çемйи хура пўртре, Ђăваш хĕрĕ, Хура пўрт, Шупашкарти миттĕнк тата ыттисем те.

Çак вăхăталлах Шупашкарта пурăнакан револђутсиллĕ хутошнĕксем пĕрлешсе Мускаври револђутсиллĕ хутошнĕксемпе (Ассоциация Художников революции—АХР.) сыхăнса ĕçлеме пуçлаççĕ. Карттинсем сотершани йенђен çĕнĕ пурнăç йенелле туртакан карттинсем пулма пуçлаççĕ. Ђăваш **АХР**-ĕн малтанхи ĕçĕ—вăл Октăпĕр револђутсин 10 çулхи йупилейне